Çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăхшăн

Асăрханулăх инкекрен хăтарĕ

2007 çулхи ултă уйăх хушшинче район территорийĕнче çул-йĕр çинчи 31 синкер ĕçе тупса палăртнă. Вĕсенче 4 çын вилнĕ, 57-ĕн аманнă. Ӳсĕрле руль умне ларнипе 5 авари пулнă, 9-ăн сурансланнă.

Мускав-Хусан федераллă автоçул çинче 14(8) синкер пулнă, 2(4) çын вилнĕ, 27(10) сурансланнă. Республика автоçулĕсем çинче 8(7) авари пулнă, 1(0) вилнĕ, 15(9) аманнă. Вырăнти автоçулсенче 9(10) синкер пулса иртнĕ, 1(1) çын пурнăçран уйрăлнă, 14(13)-ĕн аманнă.

Шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнче вăй хуракансем тăрăшнипе руль умне ӳсĕрле ларнă 45 водителе тытса чарнă. Çак кăтарту ӳссех пырать. Хăвăрах пĕлетĕр ку ырри патне илсе çитермест.

Çул-йĕр çинчи аварисен сăлтавĕсене тишкернĕ май водительсем хирĕç килекен транспорт çулĕ çине тухса кайни куç умне пулать. Çакă вара йĕркене пăсни пулать. Çавăн пекех çуран çӳрекенсем правилăсене пăхăнмаççĕ, çул урлă ятарласа паллă тунă выранта каçмалине асăрхамаççĕ те тейĕн.

Уйрăмах Москакасси ялĕ çывăхĕнчи федераллă автоçулăн 611, 615, 616 çухрăмĕсенче асăрхануллăрах пулма ыйтас килет. Автанкасси–Муркаш–Козьмодемьянск республика тата вырăнти автоçулсене щебенкăпа тата тăпрапа витнĕ. Шăпах çакăн пек вырăнсенче аварисем ытларах пулса иртеççĕ. Çакă хăвăртлăха кирлĕ шайра тытайманнипе тата çул-йĕр правилисене пăхăнманнипе çыхăннă.

Ӳсĕрле руль умне ларнисене асăрхаттарсах тăратпăр. Çуран, велосипедпа, мотоциклпа çӳрекенсен те тимлĕхе çухатмалла мар.

Акă июлĕн 10-мĕшĕнче Автанкасси-Муркаш–Козьмодемьянск автоçулăн 20-мĕш çухрăмĕнче велосипедпа пыракан М.А. Тихонов ӳсĕр пулнă. Çулăн çӳрекен пайне ӳкнĕрен сурансланнă. Çавăнпа та çул çинче пурне та асăрхануллă, тимлĕ пулма ыйтататпăр. Унсăрăн хăвăрăн тата çывăх çыннăрсен пурнăçĕсем йывăрлăха лекме пултарĕç.

С. ИВАНОВ, шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн инспекторĕ.

Георгий Федорович КОЗЛОВ

2007 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче, 71 çула кайса, Çатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта ачасене нумай çул физикăпа техника ĕçне вĕрентнĕ Георгий Федорович Козлов пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Хăйĕн пĕтĕм пурнăçне вăл çиттĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парассине халаллана, чылай вăхăт партипе совет органĕсенче ĕçленĕ.



Г. Ф. Козлов 1937 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Анат Тăмлай ялĕнче çуралнă. Тарăн пĕлӳ пурнăçра тĕп вырăн йышăннине вăл Шупашкар районĕнчи Анат Кинерти вăтам шкулта вĕреннĕ чухнех ăнланнă. Унтан 1956 çулта вĕренсе тухнăскере Совет Çарне илеççĕ. 1959 çуллăн службăра тăрать вăл. Салтак шинельне хывнă хыççăнах пултаруллă çамрăка Анат Кинерти клуб заведующине лартаççĕ. Çак хушăра та ăна педагог пулас ĕмĕт хавхалантарса тăнă. Çавăнпах ĕнтĕ тепĕр çул вăл Калайкассинчи вăтам шкулта физикăпа химии пӳлĕмĕн лаборанчĕ пулса ĕçлеме пуçлать, унтан ачасене рисованипе вĕрентет. 1961 çулта Шупашкарти пединститута вĕренме кĕрет. Ĕç биографийĕ малалла Турайри вăтам шкулта, унтан. Анат Кинер шкулĕнче тăсăлать: вăл ачасене физкультурăпа вĕрентет.

Шутланине пурнăçа кĕртме хăнăхнăскер, нимĕнле йывăрлăхран хăраманскер, çемьеллĕ, ачаллă пулнине пăхмасăр, 1963 çулта Чăваш педагогика институтне физикăпа математика факультетне очно майпа вĕренме каять. 1967 çулта институт пĕтернĕ хыççăн Оринин шкулĕнче ачасене физикăна вĕрентме пуçлать.

Кунта икĕ çул ĕçленĕ хушăра пултаруллă та хастар педагога районта та тӳрех асăрхаççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ 1968 çулта ăна ВЛКСМ райкомĕн пĕрремĕш секретарьне лартаççĕ. Халăхпа пĕр чĕлхе тупма пĕлни, ертсе пыма пултарни яр уççăнах курăнать икĕ çул çак ĕçре пулнă май. Район пуласлăхĕ çамрăксен аллинче иккенни вăл вăхăтри çамрăксен ĕçĕнче яр уççăнах палăрать.

1969 – 1973 çулсем – Георгий Федорович КПСС парти райкомĕн пай пуçлăхĕнче ĕçленĕ çулсем. Хыççăнхи тепĕр пилĕк çулта ăна райĕçтăвком председателĕн çумĕ пулма шанаççĕ. Район аталанăвĕшĕн – çак тĕллев тĕп вырăнта пулнă уншăн. Шăпах çак çулсенче ĕнтĕ районта нумай çĕнĕ объектсем хута каяççĕ. Строительство ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ хушăрах кадрсен ыйтăвне те мала хунă вăл. Пуян опытлă, çынсене ăнланма, пулăшма пĕлетчĕ Георгий Федорович. Халăхра пысăк хисепреччĕ.

Кирек ăçта пулсан та, Георгий Федорович çынлăхпа, хăйĕн тивĕçне тӳрĕ чунпа пурнăçланипе, пуçланă ĕçе вĕçне çитернипе палăрса тăнă. Çак ырă енсем вăл 1978-1983 çулсенче Кашмашри 8 çул вĕреннелли шкула ертсе пынă чух та ĕçри ăнăçу никĕсĕ пулса тăчĕç. Çатракассинчи вăтам шкулта 17 çул (1983-2000 çулсем) ачасене физикăпа техника ĕçне вĕрентрĕ. Ачасене тарăн пĕлӳ панипе пĕрлех пурнăçра йăлтах хамăртан килнине ăша хывма хăнăхтаратчĕ. Ялта та, районта та яланах ырă ятлăччĕ Георгий Федорович, ачасемшĕн те, çитĕннисемшĕн те ырă тĕслĕхчĕ.

Георгий Федорович Козловăн çутă сăнарĕ пирĕн чĕрере ĕмĕр-ĕмĕр упранĕ.

Район администрацийĕ.

Халăхăн йăли-йĕрки

Илем кунĕ

Илем кунĕ çурла уйăхĕн иккĕмĕш кунĕнче килет. Авалтанах çак уйăхра тĕрлĕ сырласемпе, йывăç çинче ӳсекен çимĕçсене пуçтарнă. Утă çулса хывнă. Уйăх пĕтнĕ вăхăтра çĕрулми кăларнă. Илем кунĕ çитиччен çĕрулми кăларса çиме юраман. Илем кунĕнче вара çĕрулмине кăларса çемьепе пĕрле ваттисене асăнса çинĕ. Вăрмансемпе çарансем çинче ӳсекен тĕрлĕ йышши кăмпасене татса хĕлле валли тăварласа хураççĕ.

Ислĕ праçникĕн историйĕ çакăнтан пуçланнă. Израильте виçĕ çул çумăр çуман. Çавăнпа унта выçлăх пулнă. Вăл вăхăтра патшара Ахав ятлă çын ларнă. Вăл уйрăм кĕлеткесем туса лартса халăха çавсене пуççаптарма пуçланă. Чăн Турра ĕненекенсем Кармил тăвĕ çине пухăннă та вăкăр пусса чăн Турра пĕлĕт çинчен анасса кĕтсе тăнă. Вăкăрне пусса шыв сапса тăнă. Илия пророк Турра кĕл тунă та, Турă çĕр çине çумăр çутарнă, пĕтĕм çĕр çинче вара çимĕç пулма пуçланă. Израиль патшин арăмĕ чăн Турра ĕненнеменсемпе пĕрле Илияна вĕлересшĕн пулнă, вăл Хорив тăвĕ çине кайса пĕр шăтăкра пытанса пурăннă.

Илия пророк нумай çул Израиль халăхĕшĕн тăрăшнă. Кирлĕ вăхăтра çумăр çутарнă, халăха чăн Турра ĕненме ăнлантарса çӳренĕ. Турă хăвачĕпе вутлă лашасем кӳлсе, вутлă урапапа пĕлĕт çине çĕкленнĕ. Çавăн чухне аслати кĕмсĕртетни илтĕннĕ. Çапла вара аслати авăтни Илия пророк пĕлĕт çине çĕкленнипе çыхăннă. Аслати кĕмсĕртеттернипе çынсем çӳлти Турă пурри çинчен пĕлнĕ. Çавăнпа ĕнтĕ аслати авăтнă чухне яланах çынсем Турра асăнса пуççапнă. Чăвашсем, ытти халăхсем пекех, çумăр нумай вăхăт çумасан, ялĕпех священникпа пĕрле турăшсем йăтса уя тухнă та турра кĕл тунă, пăтă пĕçерсе çинĕ. Çак йăла хăш-пĕр вырăнсенче халĕ те пулса иртет.

Р. МАКАРОВА.

«Радиохум – хаçат страницинче: мĕнле пурăнатăн, ял тăрăхĕ?»

Пирĕн çынсем шывсăр лармаççĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Малтанах «шыв дисциплинине» хăнăхнă Юнкă ял тăрăхĕнчи халăх паян шывшăн вăхăтра тӳлет. "Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх" МУП уйрăм специалисчĕ яла тухса пуçтарать шывпа усă курнăшăн укçана е ял тăрăхĕнче йышăнать. Малтан "Новая Юнга" хуçалăхăн тĕп энергетикĕ пулса ĕçленĕ М. Г. Ванюшкин вара Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн слесарĕ пулнă май скважинăсене пăхсах тăрать. Мĕнле калаççĕ-ха, ялта пĕр хуралтăна туса пĕтерсен, теприне юсама та вăхăт çитет, теççĕ.

Кунта та çаплах. Сергей Васильевич каланă тăрăх, Кăпаспа Юнкăри 3 скважина тепĕр чух "пуçа ыраттараççĕ". Шыв пăрăхĕсем 40 çул каялла тунăскерсем, хăйсен вăхăтне ĕçлесе çитернĕ ĕнтĕ. Кăпасра, ав, насусне те 4 хутчен улăштарма тиврĕ. Çăлсем вара кунта чавсан та усси çук. 35-40 метр тарăнăшĕнчен çеç шыв тухать.

Çăлсем тенĕрен, Явăльняра пурăнакансене анкета ыйтăвĕсем çине хуравлаттарма тĕв тунă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ. Тĕп ыйтусенчен пĕри унта çакă пулĕ: килти çăлсемпе усă курнă чухнех колонкăри шывпа усă курнăшăн тӳлеме пултратăр-и? Ку ахальтен хускатнă ыйту мар. Кунти шыв пăрăхĕн системине çĕнĕрен ĕçлеттерес кăмăл пур. Енчен те ялта пурăнакансем колонкăри шывпа усă курнăшăн тӳлеме хирĕç мар пулсан. Килте çăл пур çĕртех. Енчен халăх тӳлесшĕнех мар пулсан, Сергей Васильевич калашле, проектне хатĕрлесе укçа сая ямалли те çук. Халăхшăнах-çке ыйтăвĕ, халăха кирлĕ пулсан, колонкăсене ĕçлемелле тăвĕç. Хальхинче те халăх шухăшĕнчен килет, çав урамра пурăнакансен кăмăлĕнчен. Пĕр-пĕрин шухăш-кăмăлне шута илсе, пĕр-пĕрне ăнланса пурăнма хăнăхнă пулсан, урăхла епле-ха. Çавăн пек пурăннипех ĕнтĕ шыв ыйтăвĕ çук кунта.

Л. ПАВЛОВА.

Хаваслă çу кунĕсем

Тĕп хулара пулчĕç

Илемлĕ çу кунĕсем Москакассинчи вăтам шкулти ачасене чăннипех те савăнтарчĕç. Кăçал, виçĕ сменăпа йĕркеленĕ канупа сывлăх лагерьне çӳрекен ачасемшĕн уйрăмах асра юлчĕ.

Традицине кĕнĕ çирĕп йăлапа, вĕсем кашни лагерь смени вĕçленеспе тĕрлĕ хуласене экскурсине çитсе курчĕç: е Чулхулана, е Хусана, е Чикмене. Кăçал Шупашкара çитсе килес терĕç. Шкул автобусĕ çине вырнаçса ларчĕç те тĕп хулана экскурсине васкарĕç.

Часах ачасем Шупашкара та çитрĕç. Вĕсене Р.Г. Федорова, И.Ф. Кожевникова, А.А. Сорокина, Р.А. Попова воспитательсем Чăваш Республикин тĕп хулин историйĕпе паллаштарчĕç.

Паянхи Шупашкар – пысăк та илемлĕ хула. Ачасем чи малтанах Атăл хĕррине çитсе курчĕç. Вĕсем Чăваш драмтеатрĕнче "Иванушка – дурачок" юмаха пăхрĕç. Вырăс халăх юмахĕ ачасене питĕ килĕшрĕ. Юмахри сăнарсемпе сывпуллашнă хыççăн, ачасем Атăл хĕрринчи аттракцион площадкине васкарĕç. Пĕрисем чуччупа карусель çинче ярăнчĕç, теприсем "космос" салонĕнче пулса курчĕç. Пĕчĕккисем вĕрсе хăпартнă сăртран ярăнса савăнчĕç. Арçын ачасем пăшалпа та персе пăхрĕç. Женя Андреева тĕл пересспипе никам та çĕнтереймерĕ.

Атăл хĕрринчи Амăш палăкĕ патĕнче ачасем сăн ӳкерчĕксем ӳкерĕнчĕç. Атăл чарланĕсене тата шывран фонтан сирпĕнсе тăнине ачасем чылайччен сăнаса тăчĕç.

Ачасем экскурсипе кăмăллă юлчĕç.

Й. КОЖЕВНИКОВА.
Москакассинчи сывлăхпа кану лагерĕн воспитателĕ.

Вулакан пултарулăхĕ

Каçарсам мана

Каçарсам мана, аннеçĕм,
Тархасшăн каçарсам.
Ăнланмарăм, тӳрех пĕлеймерĕм,
Аннеçĕм, эсĕ каçарсам.
Кашни кунах ыйтăттăм каçару.
Ĕненетĕп, пулĕ ăнлану.
Хĕвелĕм эсĕ маншăн,
Мерченĕм те эсех.
Ах, аннеçĕм, чунтан тархаслатăп,
Каçарсам мана, ачуна:
Йăнăшсемшĕн, кӳрентернĕ самантсемшĕн,
Ăнланма пĕлменнишĕн вăхăтра.
Аннеçĕм, манăн ылтăнăм,
Çĕр çинче эсĕ чи хакли.
Аннеçĕм, манăн ахах пĕрчийĕм,
Çук никам та сан пекки.
Аннеçĕм, сана тавтапуç:
Парнеленĕшĕн çак çут тĕнчене,
Ӳстернĕшĕн – хĕр çуралнишĕн савăнса,
Вĕрентнĕшĕн – ыр çын пулма пиллесе,
Тав тăватăп ăшшăн çупăрласа.
Аннеçĕм, тайма пуçăм сана
Эсĕ çĕр çинче пурришĕн.
Пире пурнăç çулĕ çине кăларнишĕн,
Мăнукусене чунтанах юратнишĕн.
Мĕн сунам-ха сана, паллах, вăрăм ĕмĕр,
Çак пурнăç ялан телей кӳтĕр.
Çирĕп сывлăх сунам, килĕшӳ,
Аттепеле пурăнăр тату.
Аннеçĕм, тайма пуçăм сана
Эсĕ Çĕр çинче пурришĕн!
Атте, Турăçăм, тайма пуçăм сана
Манăн анне пек ырă аннесемшĕн!

А. ТИХОНОВА.

Тав тăватпăр

Юратнă мăшăра, аттене, асаттене – Çатракасси ялĕнче пурăннă Георгий Федорович Козлова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, çак пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн район администрацине, пирĕн тăвансене, хурăнташсене, тус-юлташсене, ял-йыша, кӳршĕсене, Çатракасси шкулĕн коллективне чĕререн тав тăватпăр.

Мăшăрĕ, ачисем, мăнукĕсем.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаем цемент, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид, лаки, краски, обои. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».
Тел.: 8-903-346-40-58. 4-5.

Для работы в Московской области с высокой оплатой труда (около 20000 рублей в месяц) требуется бригада специалистов в составе 3-х человек с опытом работы по копке колодцев. Инструменты и оборудование имеются. Есть возможность обучить. Тел.: 60-024.

Продается автомашина ВАЗ-21099 1998 года выпуска, лазурно-синего цвета, есть музыка, сигнализация, антикор. Цена 80 тыс. рублей. Тел.: 8-906-134-11-84.

Çатракассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта акăлчан чĕлхине вĕрентекен Г.Н. Ильдероан мăшăрĕ, çак шкулта нумай çул хушши физика тата технологи предмечĕсене вĕрентнĕ

Георгий Федорович КОЗЛОВ

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ

Георгий Федорович КОЗЛОВ

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇЁНТЕРӲ ЯЛАВЁ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

Заместитель гл. редактора
В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3461. Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 31.07.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.